Хуçалăхсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсем

Тупăш пурри шанчăк çуратать

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем иртсе пыраççĕ. Вĕсенче пулса курсан çĕр ĕçченĕсем умри йывăрлăхсене пăхмасăрах малашлăх планĕсене палăртнине куратăн та пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕнче те хресченĕн алли тĕппипех усăнманнинчен тĕлĕнетĕн. Тĕлĕнетĕн те савăнатăн. Çĕр ĕçченĕ ыранхи кунпа пурăнать пулсан, пирĕн малашлăх тĕллевĕсем те пурри куç умĕнче. Çакнашкал ырă шухăш-кăмăлпа тухрăм эпĕ пуш уйăхĕн малтанхи кунĕсенче «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕнче иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕнчен.

– 2009 çул Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ пулчĕ пулсан, эпир хамăр умри ĕçсене тивĕçлипе тума пултартăмăр-и? Çак ыйту çине пирĕн паян тулли хурав памалла. Кăна тума эпир паян хатĕр, – пуçларĕ хăйĕн сăмахне хуçалăх ертӳçи Михаил Николаевич Шишокин.

Кун хыççăн вăл хуçалăхăн çулталăк хушшинчи кашни ĕçĕ çинче, ĕçлекенсен мал туртăмлăхĕпе çитменлĕхĕсем пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Уйрăм кăтартусемпе илсен, кооператив ĕçченĕсем 2009 çулта пĕтĕмпе 246,2 тонна сĕт сунă, 78 тонна аш-какай туса илнĕ. Çулталăк хушшинче 77 пăру, 514 сысна çури илни те виçĕм çулхинчен ăнăçлăрах кăтартусем. Çавăнпа та ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕх отраслĕ иртнĕ çул пысăк тупăш панинчен те тĕлĕнме кирлех мар. Тупăш пирки калас пулсан, вăл пĕчĕкçĕ «Восток» кооперативăн та пĕлтĕр пĕр миллион та 167 пин тенкĕ пулнине шута илсен, çĕр ĕçченĕ те тупăшлă ĕçлеме пултарни пирки калать.

– Ытларах тупăша выльăх-чĕрлĕх отраслĕ панăран çитес çу кунĕсенче пирĕн паха выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ янтăласси çине тимлĕрех пăхмалла пулать. Аратлă выльăхсемпе, ӳсен-тăранăн элиталлă вăрлăхĕсемпе ĕçлессине те иккĕмĕш вырăна хăварма кирлĕ мар. Аталанăвăн çак çул-йĕрне иртнĕ çул хамăр куçпах курса ĕнентĕмĕр. Ĕçлекенсен хисепĕ тăтăш чакса пынă вăхăтра ĕç калăпăшĕ çав виçерех юлни çĕнĕлĕхсемпе туслăрах пулма ыйтать, – терĕ хăйĕн сăмахне вĕçленĕ май Михаил Николаевич.

Хуçалăх ертӳçин тата сăнав канашĕн председателĕн отчечĕсене сӳтсе явма хуçалăх специалисчĕсемпе ял çыннисем, хуçалăх аталанăвĕшĕн яваплăха туякансем хутшăнчĕç. Кашнийĕнех хăйĕн асăрхаттарăвĕсемпе çĕнĕ сĕнĕвĕсем, ыранхи куна шанчăклă пăхса ĕçлемелли утăмсем. Çапла активлăхпа Мулкачкассисем кун йĕркинчи 12 ыйтăва та пăхса тухрĕç, ырă енсене тата çитменлĕхсене палăртса кашнинпех тивĕçлĕ йышăну турĕç.

Хуçалăх уставĕпе килĕшӳллĕн Мулкачкассисен кăçал кооператив ертӳçине те, правлени канашĕн членĕсене те, ыттисене те суйламалла пулчĕ. Ертӳçĕ пирки сăмах тăрсан Мулкачкассисемпе Тереçсем пĕр саслăн пулсах хăйсене тупăш çулĕпе малалла та Михаил Николаевич Шишокинах ертсе пыма шанчĕç.

«Восток» хуçалăх ĕçченĕсем тĕрĕс йышăну тунине 2010 çулăн малтанхи икĕ уйăхĕн кăтартăвĕсемех çирĕплетеççĕ. Кăçалхи январь-февраль уйăхĕсенче кооператив кассине пĕтĕмĕшле кĕнĕ укçатенкĕ сумми çулталăк кайăлăхинчен самай пысăкрах.

А. БЕЛОВ.

Сире пĕлме

Йăлари каяшсене турттарса тухасси

Нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансемшĕн йăлари каяшсене, çӳп-çапа ятарлă урнăсене тухса пăрахнипе ĕç вĕçленет темелле. Пурăнмалли çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăх ĕçченĕсем вара çак урнăсенче пухăнакан каяшсене тата çӳп-çапа, паллах, вырăнтан турттарса тухассипе тимлеççĕ.

Чăваш Республикин конкурентлă политикин тата тарифсен патшалăх службин 2009 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнчи 25-7/в № постановленийĕпе пирĕн район валли те йăлари хытă каяшсене утилизацилеме ятарлă тариф палăртнă: 1 кубла метр каяш утилизацилесси 215 тенкĕ 32 пуспа танлашать. Çапла март уйăхĕнчен пуçласа услугăшăн укçа илессине çак тарифпа килĕшӳллĕ туса пыратпăр. Сăмахран, 33 тăваткал метр лаптăклă пурăнмалли çурт-йĕршĕн (балкон лаптăкне шутламаççĕ) уйăхне услуга хакĕ 49 тенкĕ 83 пус, 49,10 тăваткал метрлă пурăнмалли çурт-йĕршĕн – 74 тенкĕ 14 пус, 62,3 тăваткал метрлишĕн – 94 тенкĕ 07 пус.

Хальхи вăхăтра районта йăлари хытă каяшсене пухса, турттарса тухса утилизацилессине «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ йĕркелесе пырать. Районти Ивановка ялĕ çывăхĕнчи çĕнĕ полигон хута кайиччен çӳп-çапа Красноармейски районĕнчи полигона турттарса тăраççĕ.

Пĕлтĕрхи анализсем йăлари хытă каяшсене пухса, турттарса тухса утилизацилесси 2 миллион тенкĕпе танлашнине кăтартса пачĕç. Çакă – районти пĕтĕм нумай хваттерлĕ çуртсене услугăпа тивĕçтерни. Пĕлтĕр акă 5616,5 кубла метр каяш турттарса тухнă. Вăл шутра тата контейнерсемсĕр – 804 кубла метр.

Халĕ хăш-пĕр çуртсем умне палăртнă вăхăтра каяшсемпе çӳп-çап пуçтаракан машинăсем пырса лараççĕ. Çав вăхăтра хваттерсенчен каяшсем илсе тухса ĕлкĕреймеснисем е вăл вăхăтра килте пулайманнисем вара каяшсене пакетсем ăшне пухса ăçта кирлĕ унта пăрахса хăварнине курсан, паллах, тирпейлĕх мĕнне ăнлансах çитейменни курăнать. Хваттерте пурăнакансем юнашар çуртсем патĕнчи урнăсем патне утма ӳркеннипех ĕнтĕ каяшсем тултарнă пакетсем гаражсем хушшинче те, ытти вырăнсенче те япăхса выртаççĕ. Çак япăх йăлана тĕппипех пĕтерме тăрăшасчĕ, хамăр пурăнакан вырăна тирпейлĕ тытасчĕ.

Н. ЛЮБИМОВ,
«Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх» ертсе пыракан компани ертӳçи.

Обществăлла организацисенче

Пурнăç уттинчен юлмаççĕ

Куç курманнисен Муркашри вырăнти организацийĕн çулсерен пулакан отчетлă пухăвĕ мартăн 11-мĕшĕнче Элĕкре иртрĕ. Обществăлла организацин иртнĕ çулхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен организаци ертӳçи Анастасия Михайлова доклад туса пачĕ. Ревизи комиссийĕ ирттернĕ тĕрĕслевĕн акчĕпе те интересленсех паллашрĕç делегатсем.

Çулталăк хушшинче куç курманнисем 20 ытла пуху-канашлусене, ăмăрту-куравсене, «Ыр кăмăллăх» клубăн черетлĕ ларăвĕсене хутшăннă, куç курман инвалидсен кулленхи çăмăл мар пурнăçĕ интереслĕрех ирттĕр тесе тăрăшнă. Республика шайĕнче ирттернĕ ăмăртусенче те Муркашсем малтисем ретĕнче пулнă. Акă шашкăлла тата шахматла выляс енĕпе Кăнтăрти культура çуртĕнче ирттернĕ ăмăртусене те пирĕн организацирен 6 çын таранах хутшăннă. Саша Николаевпа Маргарита Пушкарева вылявсенче чи маттуррисем пулнă.

Нумайăшĕ хальхи вăхăтра: «Пурăнма пур енчен те çăмăл мар»,– теме хăнăхнă. Çут çанталăк илемне те, хĕвел çутине те курса киленеймеççĕ пулин те, куç курманнисен чун ăшшийĕ, пурнăçа юратни, ăс-хакăл енчен мал ĕмĕтлĕ пулни ыттисемшĕн нумай чухне тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Пурте пĕрле пухăнсан уйăхсерен иртекен тĕл пулусенче вĕсене канăçсăрлантаракан ыйтусем яланах чылай. Вĕсене район, ренспублика аталанăвĕ те хумхантараççĕ, чаплă «врач офисĕсенче» сиплевçĕсем пулманни те канăçсăрлантарать.

Ватăсем уйрăмах тимлĕх ыйтаççĕ. Вĕсене яланах пулăшу кирлĕ. Çавăнпа та Элĕкри шкул ачисем ялсенче пурăнакан пĕччен ватăсене е сусăр çынсене пулăшу сĕнме пуçланине пирĕн йышри ватăсем ырласах йышăнчĕç.

Обществăра пулса иртекен улшăнусем, кризис тапхăрĕ обществăлла организацисен пурнăçĕ çине те витĕм кӳреççех. Обществăлла организацисен ертӳçисем тепĕр чухне пулăшу ыйтма пырсан та ăнланманни пулмасть мар. Апла пулин те иртнĕ çул район администрацийĕ, ял тăрăхĕсен администрацийĕсем, социаллă хӳтлĕх органĕсем, Пенси фончĕ, уйрăм организацисем те Муркашри куç курманнисене сахал мар пулăшу кӳнĕ.

Элĕке кайма 2-мĕш çул ĕнтĕ Муркашсем «Оринино» ял хуçалăх кооперативĕн автобусĕпе усă кураççĕ. Иксĕлми тав сăмахĕ калатпăр уннăн хуçалăх ертӳçине Юрий Шишокина тата автобус водительне Сергей Сурикова. Тĕрлĕ ăмăртусем ирттернĕ чухне те пире районти библиотекăра ĕçлекенсем, культура ĕçченĕсем нумай пулăшу сĕнеççĕ.

2010 çулта Раççейри куç курманнисен обществине туса хунăранпа 85 çул çитрĕ. Чăваш Республикинче вара 80 çул каялла Канаш хулинче мартăн 11-мĕшĕнче куç курманнисен ячейкине йĕркеленине Уставпах çирĕплетсе хăварнă.

Республикăра 4 пин ытла куç курман сусăр пурăнни паллă. Вĕсенчен 2600-шĕ кăна ВОС организацине кĕнĕ. Пирĕн организаци, паллах, куç курманнисемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ çынсене обществăра, пурнăçра кирлĕ пулăшу памалла. Обществăлла организаци аталанасси вара чи малтан ертӳçĕсенчен тата куç курманнисен обществин кашни членĕнчен килет. Çавăнпа та малашне те хамăрăн пĕрлĕхе çирĕплетсе пырăпăр.

В. АЛЕКСАНДРОВ,
куç курманнисен Муркашри организацийĕн ертӳçин çумĕ, 1-мĕш ушкăн инваличĕ.

Налук ыйтăвĕсемпе

Вăхăт нумаях юлмасть

Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, уйрăм çынсен 2009 çулшăн транспорт налукне тӳлемелли вăхăт 2010 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче тухать.

Транспорт налукне кредит учрежденийĕсенче, почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсем урлă, банкоматсенче тата Раççей Перекет банкĕн тӳлев терминалĕсемпе усă курса тӳлеме пулать.

Енчен те гражданин транспорт хатĕрĕ пур çинчех ятарлă налук пĕлтерĕвне илмен пулсан, унăн хăй пурăнакан вырăнти налук инспекцине пырас пулать. Транспорт налукне вăхăтра тӳлесе татманшăн Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 75-мĕш статйипе килĕшӳллĕн иртсе кайнă кашни куншăн пени тӳлеме тивет.

Налуксем пирки – СМС урлă

Кунпа пĕрлех мартăн 11-мĕшĕнчен тытăнса налук тӳлекенсене çĕнĕ услуга пама тытăннă. Малашне уйрăм çынсен транспорт, çĕр тата пурлăх налукне тӳлессипе парăм пуррине кĕсье телефонĕпе усă курсах пĕлме пулать. Çавна валли хăвăрăн ИНН номерне кăтартса СМС çине 8-919-657-55-55 номерпе хыпар ямалла. Гражданинăн парăм пуррипе пулманни пирки информаци хăех килет.

Енчен те налук тӳлекен парăм мĕн чухлĕ пулнине тĕрĕслесе пăхасшăн пулсан, унăн çав номер çинех татах тепĕр пĕлтерӳ ямалла пулать, унта хăйĕн пурлăхĕ ăçта учетра тăракан инспекцин 4 цифрăллă кочĕ кирлĕ. Ана çав вăхăтрах адрес тата инспекцин çыхăну телефонĕн номерĕ пирки информаци ярса парĕç.

Çавна палăртмалла: çĕнĕ информаци сервисĕ тӳлевлĕ. Ыйту яраканран яланхи пекех СМС тӳлевĕ чухлĕ тытса юлĕç. Çапах та çакă вăл налук инспекцине пырса çӳренинчен ансатрах.

СМС-пĕлтерӳсемпе çыхăнманнисене вара çавна пĕлтересшĕн. Хăвăрăн парăм пирки Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕн сайчĕ çинче те пĕлме пулать (http://www.r21.nalog.ru/). Ун валли «Личный кабинет налогоплательщика» сервис пур. Ку тĕлĕшпе вара услугăшăн тӳлеме тивмест.

Тĕрĕслевпе касса техникине регистрацилеме тивет

2009 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче йышăннă 103-ФЗ № «О деятельности по приему платежей физических лиц, осуществляемой платежными агентами» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн тӳлев агенчĕсен 2010 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тӳлев терминалĕ (банкомат) шутне кĕрекен тĕрĕслевпе касса техникине налук органĕсенче регистрацилеме тивет.

Регистраци вăхăчĕ вĕçленичченех уйăх та юлмарĕ ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра регистрацие пыракансен йышĕ нумай мар. Анчах та вĕсен шучĕ регистраци срокĕ тухнă тĕле нумайланма пултарать. Çавăнпа та тĕрĕслевпе касса техникине налук органĕсенче регистрацилессине кая хăварма кирлĕ мар. Тĕрĕслевпе касса техникин патшалăх реестрне кĕртнĕ тата тӳлев терминалĕ (банкомат) шутĕнче усă куракан тĕрĕслевпе касса техникине регистрацилемелле.

Çаксен налук органĕсенче тĕрĕслевпе касса техникине регистрацилемелле:

– тӳлевсем йышăнакан агентăн (тӳлев операторĕн);
– тӳлев субагенчĕн (тӳлев операторĕн);
– банкри тӳлев агенчĕн;
– кредит организацийĕн (енчен те вăл тӳлев терминалĕпе е банкоматпа усă курать, анчах та ку вăл асăннă кредит организацийĕн тĕп çăл куçĕ пулса тăмасть тата харпăрлăх енĕпе унăн кăна шутланса тăмасть пулсан).

Тĕрĕслевпе касса техникине регистрацилеме заявлени çырмалла (формине Раççей Федераллă налук службин 2008 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнчи ММ-3-2/152@ хушăвĕпе çирĕплетнĕ, кунпа пĕрлех тĕрĕслевпе касса техникин паспорчĕ тата техника пулăшăвĕ паракан центрпа тунă килĕшӳ кирлĕ пулать. Тĕрĕслевпе касса техникине налук органĕнче регистрацилеме унпа усă куракан хăй пурăнакан е предприяти вырнаçнă вырăнти налук органне заявлени çырса парать.

Тӳлев (банк) терминалĕнче палăртнă тĕрĕслевпе касса техникине регистрацилеме налук органĕн представителĕ, тӳлев агенчĕ е унăн представителĕ, техника пулăшăвĕ паракан центр специалисчĕ тӳлев терминалĕ вырнаçтарнă вырăна тухаççĕ.

Терминалсем Федераллă саккуна тивĕçтермеççĕ пулсан, вĕсен ĕçне 2010 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса чарса лартаççĕ. Раççей Федерацийĕн Административлă майпа правăна пăсни çинчен калакан кодексăн 14.5 статйин 2-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн тĕрĕслевпе касса техникипе усă курмалли йĕркене пăснăшăн уйрăм çынсене 1000 тенкĕрен тытăнса 1500 тенкĕ таран, должноçри çынсене вара 3000 тенкĕрен тытăнса 4000 тенкĕ таран, юридици вăйĕнчи çынсене 30000 тенкĕрен тытăнса 40000 тенкĕ таран штрафлама пултараççĕ.

Культура хыпарĕсем

Библиотекăсемпе туслă пулăр

Эпĕ шкулта ĕçленĕ май кĕнекесем вулама кăмăллатăп. Çавăнпа та час-часах Анаткасси ялĕнчи библиотекăна çул тытатăп. Пирĕн патри библиотека çутă та илемлĕ. Сентресем çинче тĕрлĕрен кĕнекесем, «Тав сана, вĕрентекен», «Вилĕмсĕр Нарспи авторĕ», «Вăрçă çулăмĕ витĕр» тата ытти выставкăсене курма пулать.

Галина Павловна Андреева библиотекарь вулакансене яланах тарават, ăшă кăмăлпа, савăнăçлă кулăпа кĕтсе илет. Çавăнпах ĕнтĕ унта яланах çынсем пур. Вăл кирлĕ кĕнекесене тупса пама пулăшать.

Библиотекăра шкул ачисемпе те, аслисемпе те яланах тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ. Шкул ачисем уроксем хыççăн та, каникула кайсан та яланах библиотекăна васкаççĕ. Вĕсем валли кунта çĕнĕ кĕнекесем çителĕклĕ.

Ку хутĕнче мана Галина Павловна Виталий Шемекеев çырнă «Ай тăварлă-çке кĕвĕçӳ куççулĕ» кĕнекене вулама сĕнчĕ. Хайлава юрату романĕн жанрĕпе çырнă. Унта тĕп сăнарсем виççĕн: райĕçтăвком председателĕн çумĕ Георгий Борисович, унăн мăшăрĕ Анюта тата Георгин малтанхи юратăвĕ – Виолетта медсестра.

Георгий арăмне хытă юратнă. Ăна сăлтавсăрах кĕвĕçет. Чее Виолетта Георгийпе Анютăна уйăрса яма темĕнле пăтăрмах та кăларма хăтланать. Кĕвĕçӳ туйăмне пула арăмне упраймасть Георгий, ăна нушана кăна кĕртсе пырать. Çапла çав, кашни çын хăйĕн телейне шырать, теприн ăраскалне ăмсанса темĕнле начар ĕç те тума хăтланса пăхать. Тата тепри, телейне тупнă çĕртех, ăна урăхла хак пама хăтланать. Инкек килсе тухсан кăна вара унăн куçĕ уçăлать. Юлашкинчен Георгий ывăлĕпе юлташĕсем пулăшнипе тĕрĕслĕхе çиеле кăларать.

Çавăн пекех «Пурнăç юмах мар» çĕнĕ кĕнекене вуласа тухрăм. Кĕнекере повеçсем, мыскарасем, ачапăча вулавĕ, пьесăсем, очерксемпе аса илӳсем, сăвăсем. Акă кĕнекери «Малтанхи çăлтăрсем» повеçе илер-ха. Ялта пурăнма кичем, укçи-тенкине сахал тӳлеççĕ. Çамрăксем хуланалла куçса каяççĕ те ялта ĕçлеме çын та юлмасть. Çамрăксене колхозрах хăварас тесе шкул директорĕсем, колхоз председателĕсем тĕрлĕ ĕçсем туса ирттереççĕ. Пĕрисем тĕрĕс мар меслетсемпе усă кураççĕ: вĕренсе тухнисене аттестат памаççĕ. Вĕсене кирлĕ пек условисем туса памасăрах ферма ĕçне «кӳлеççĕ», ĕç хатĕрĕсем кирлĕ пек пулманнипе ачасене сусăртса пĕтереççĕ.

Теписем вара ачасемпе пĕр чĕлхе тупса ĕçлеме тăрăшаççĕ. Çамрăксене ĕçлеме кирлĕ пек условисем туса пама тăрăшса ачасемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Денис Гордеев çырнă «Хĕрес хывнă хĕвел» кĕнеке те питĕ интереслĕ. Кĕнекене пĕр романпа икĕ повесть кĕнĕ. Вĕсене пĕр тема пĕрлештерсе тăрать. Самана улшăннă май çынсен пурнăç йĕрки те урăхланать, ырăпа усал кĕрешĕвĕнче усалли маларах пырать. Çĕнĕ саккунсем çул çитменнисене те, çамрăк ăрăва та суяпа ултав айне тăваççĕ. Çапах та произведенисенчи тĕп геройсем çынлăха, чун-чĕре пахалăхне сутас марччĕ тесе пурăнаççĕ.

Пĕчĕк ачасем валли те лайăх кĕнекесем нумай библиотекăра. Çавăнпах ĕнтĕ манăн пĕрремĕш класра вĕренекен хĕрĕм те тăтăшах библиотекăна çӳрет.

Кĕнекесенчи сăнарсем пире пурнăç çине урăхларах пăхма, йывăрлăхсене çĕнтерме, тĕрĕс çулпа утма вĕрентеççĕ. Тĕрлĕ геройсен сăнарĕсемпе ачасене воспитани панă çĕрте те усă курма пулать. Хăш-пĕр кĕнекесене вулама пуçласан чарăнма та май çук, çывăрма та манса каятăн. Çавăнпа та пурне те библиотекăсене тăтăшах çӳреме чĕннĕ пулăттăм.

Ирина АРХИПОВА.

Кĕçĕн Чураш ялĕ.